## Арбуз.

Çуркунне, çĕр типсен, эпĕ пахчана тухрăм. Ешĕл курăк хушшинче пĕр çамрăк хунава асăрхарăм. Ку лайăх йышши чечек пулĕ-ха тесе эпĕ ăна чавса кăлартăм та пĕр хӳтлĕхе куçарса лартрăм. Унта ăна ир пуçласа каçченех хĕвел ăшăтать, çил те тивместь.

Эпĕ чечеке лайăх пăхрăм, каççерен шыв сапрăм, çумкурăк пусасран сыхларăм. Анчах манăн хунав çӳлелле çĕкленмерĕ, вăл çĕр тărăх тăсăлса кайрĕ. Вара эпĕ çак курăк чечек маррине пĕлтĕм те эрне хушши пырса та пăхмарăм.



Тырă вырма тухнă тĕле хайхи хунав парка ӳссе ĕлкĕрнĕ, çăмламас çулçи айĕнче кавăн пек чăмăртаннă пĕчĕк çимĕçсем те пур. Эпĕ аттене чĕнсе илтĕм те:

— Мĕнле кавăн ку? — тесе ыйтрăм.

Атте ăна курсан тĕлĕнсех кайрĕ.

— Арбуз ку. Пирĕн пахчара та арбуз ӳсет иккен, — терĕ вăл. — Анчах мĕнле майпа кунта шăтса ӳснĕ вăл? — тесе ыйтрĕ.

Эпĕ ăна ăçтан куçарса лартни çинчен йĕркипе каласа патăм.

— Астăватăн-и, — терĕ вара атте, — иртнĕ çулхине шăпах çав вырăнта арбуз çинĕччĕ. Унăн вăрри çĕр айне ваăнса юлнă та çуркунне шăтса тухнă.

Пирĕн пахчара арбуз ӳсет тесе эпĕ хам та шутламанччĕ. Çав арбуза эпир кĕрхи кунсем çитичченех лайăх пăхса усрарăмăр. Кĕркунне вара çав пĕр тĕпренех тăвата арбуз татрăмăр та çемйипех ларса çирĕмĕр. Арбузĕ питĕ тутлă пулчĕ.

1. Ача ешĕл курăк хушшинче мĕн асăрханă?
2. Вăл çамрăк хунава мĕншĕн хӳтлĕхе куçарса лартнă? Ăна ача мĕнле пăхнă?
3. Хунав ӳссе çитсен, вăл мĕнле çимĕç пулни палăрнă?
4. Эсир шкул пахчинче мĕнле опытсем туса иртеретĕр? Каласа парăр.